25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
СЕНТЯБРЬ.
2
ЮНКУН
204(6139) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулĕ

Ĕнер Совет çĕршывĕнчи шкулсенче çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ. Пирĕн республикăри шкулсен 1-мĕшпе 4-мĕш класĕсенчи партăсем хушшине 106.740 ача вырнаçса ларать. Аслăрах классенче вĕренекенсем октябрĕн 1-мĕшĕнчен уйхирсенче ĕçлесçĕ-ха, вĕсем колхозсене кăçалхи вăйлă тырпула ăнăçлăн пухса кĕртме пулăшаççĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă чухнехи яланхи савăнăçпа пĕрлех пирĕн çамрăк патриотсен чĕрисенче пысăк туйăм çунса тăрать. Кашни паян тăван çĕршыв умне тухса тăнă пысăк хăрушлăх çинчен, çав хăрушлăха сирсе ярасси çинчен, пирĕн аслă çĕршыв çине килсе тапăннă тискер тăшмана çапса аркатма Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйран пулăшасси çинчен шухăшлать. Учитель те, малтанхи урока пуçласа, хăйĕн хĕрÿллĕ сăмахне çакăн çинчен калать, вăл ачасене тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсем пулса çитĕнме, пулас воинсемпе строительсем валли кирлĕ пĕлÿлĕхе алла илессишĕн çине тăрса кĕрешме, татах та лайăхрах вĕренме, çирĕп дисциплинăллă пулма чĕнет. Пирĕн çамрăк патриотсем тăван çĕршыв умĕнчи аслă ответлăхпа тивĕçлĕхе вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕнчен, пĕрремĕш урокран пуçласах çирĕппĕн туйса илме тивĕçлĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулне шкулсем, пысăк йывăрлăхсем пулнине пăхмасăрах, пĕтĕмĕшпе илсен, йĕркеллĕн те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Рабочисемпе колхозниксем, обществăллă организацисем шкул çурчĕсемпе инвентарьсене юсама, шкул валли вутă хатĕрлеме чылай пулăшрĕç. Вăрçăн хаяр кунĕсенче общественноçăн çак пулăшăвĕ уйрăмах кирлĕ пулса тăчĕ. Учительсемпе вĕренекенсем хăйсем те шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрлесе çитерессишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулти (директорĕ Богатырева юлташ) учительсемпе аслăрах классенче вĕренекенсем хăйсен шкулĕ валли хĕл каçиччен хутмалăх çителĕклĕ таранах (225 кубометр) вутă хатĕрленĕ. Классемпе инвентарьсене юсаса йĕркеленĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пĕр çулталăк ĕçлесе пирĕн учительсем чылай опыт пухрĕç. Вĕренÿ ĕçне вăрçă палăхăрĕпе çыхăнтарса мĕнле йĕркелемеллине учительсем халĕ ĕнтĕ пĕлеççĕ. Çак опыта пирĕн пухса пĕтĕçтермелле, ăна мĕнпур шкул коллективĕсене, мĕнпур учительсене, уйрăмăнах çамрăк педагогсене, паллаштармалла. Фронта кайнисем вырăнне пирĕн кăçал шкул ĕçне çамрăк учительсем сахал мар хутшăнчĕç. Сăмахран, пĕр Ишлей районĕнче кăна пуçламĕш классенче вĕрентме вăтам шкул пĕтернĕ çамрăксем учителе кĕчĕç. Çакăн пек тĕслĕхсене кашни районрах курма пулать. Вĕсене методика тĕлĕшĕнчен нумай çул хушши ĕçленĕ опытлă педагогсен пулăшмалла.

Çамрăк учительсене пулăшас майпа çак кунсенче Ишлей районĕнче 1-мĕшпе 4-мĕш классенче вĕрентекенсен конференцине, Октябрьски, Сĕнтĕр тата ытти районсенче семинарсем туса ирттернĕ. Çав конференцисемпе семинарсенче хальхи самантри политикăллă ыйтусене, вĕренÿ планĕсене сÿтсе-явнă, методика тĕлĕшĕнчен кăтартусем панă. Сĕнтĕр районĕнчи учительсен семинарĕнче плансем тăвас ыйтăва сÿтсе-явма 17 сехет уйăрнă, практикăллă уроксем туса ирттернĕ. Ку енĕпе кунта ватă учительсем: орденоносец Багров юлташ, Яшмолкина, Мостаченко юлташсем çамрăксене паха кăтартусем панă.

Кăçалхи вĕренÿ çулĕнчи тĕп задачăсенчен пĕри вăл—пурне те хут вĕрентес сталинла закона малалла пурнăçа кĕртсе пырасси пулса тăрать. Ку енĕпе иртнĕ çулти йăнăшсене çирĕп шута илмелле. Иртнĕ вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнче ачасем вĕренĕве пурте тĕрĕс-тĕкĕл явăçнă çĕртех кайран чылай ачасем шкула çÿреме пăрахрĕç. Çакă вăл чи малтан уйрăм районсенче шкулсем валли тивĕçлĕ услови туса паманнинчен килнĕ.

Ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарас тĕлĕшпе Октябрьски районра пур шкулсенче те ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене туса ирттернĕ. 1-мĕшпе 4-мĕш классенче вĕренме тивĕçлĕ ачасене шкулсем тăрăх çуркуннех списоксем туса шута илнĕ, халĕ çав списоксене тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухса тĕрĕсленĕ. Районĕпе пурĕ пуçламĕш классенче 3.457 ача вĕренме тытăнать. Анчах çак ĕçе пур çĕрте те мар-ха тĕплĕн тунă. Хăшпĕр вырăнсенче куçса килнĕ ачасене шута илсех çитереймен.

Эпир вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулне кăтартуллăн ирттерме пултаратпăр, ăна çапла ирттермелле те. Пирĕн правительство вырăнти совет оргăнĕсене шкулсене йĕркеллĕн ĕçлемешкĕн пур условисене те туса пама хушнă. Вăрçă вăхăтĕнче шкулсемшĕн тăрăшассине вăйсăрлатмалла мар, татах та ытларах вăйлатмалла. Чылай шкулсенче халĕ учебниксемпе вĕренÿ пособийĕсем, хутсемпе карандашсем çителĕксĕр. Ку тĕлĕшпе уйрăм вырăнсенче паха ĕçсем туса ирттереççĕ. Сĕнтĕр районĕнче ачасем хушшинче 8 пин учебник улăштарса илнĕ, çĕнĕрен чылай кÿрсе килнĕ. Пуçламĕш классем валли кунта учебниксем çителĕклĕ, малтанхи вăхăта валли хут та пур. Ишлей районĕнчи шкулсенче иртнĕ çул перекетлесе хăварнă хутпа кăçал усă кураççĕ. Кашни уйрăм шкулта мĕн чухлĕ хут юлнине тĕплĕн шута илнĕ, шкулсенче халĕ 5 пин тетрадь пуррине палăртнă тата çĕнĕрен те кÿрсе килнĕ. Анчах хăшпĕр çĕрте перекетлесси çинчен, иртнĕ çулти запассене шыраса тупасси çинчен шухăшламаççĕ, çÿлтен парассине кăна кĕтсе лараççĕ. Хут перекетлесси çине хальхи вăхăтра уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Шкул коллективĕсем кăçал пирĕн колхозсене уйхир ĕçĕсенче нумай пулăшрĕç, пулăшаççĕ те. Çавăнпа та çакăн пек пулăшу вăл хире-хирĕç пулса пыма тивĕçлĕ. Анчах халĕ чылай шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне вутăсăр кĕтсе илчĕç. Çак ыйтăва халех татса памасан, вăл шкулсен вĕренÿ ĕçне пысăк чăрмав кÿме пултарать.

Вырăнти партипе совет оргăнĕсен, комсомолпа профсоюз организацийĕсен, пĕтĕм совет общественноçĕн шкулшăн куллен çине тăрса тăрăшмалла, куллен пулăшса тămалла. Фронтовиксен тата вăрçă пыракан районсенчен куçса килнисен ачисем çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Вĕсене шкулта лайăх вĕренме пур майсем те туса памалла, кĕпе-тумтирсем, урана тăхăнмалли, апат-çимĕçсем вăхăтра тупса парассишĕн тăрăшмалла. Фронтра нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсене хирĕç геройла çапăçакан, хамăрăн тăван çĕршыва хăйĕн юнне хĕрхенмесĕр хÿтĕлекен воин хăйĕн ачишĕн лăпкă пултăр, çав шухăш ăна çапăçура ан чăрмантартăр.

Пирĕн совет учителĕсем, пирĕн шкул ачисен нумай миллионлă çарĕ хăйсен умĕнчи ответлăхпа тивĕçлĕхе ăнланаççĕ. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулне организованно пуçласа, совет шкулĕ умне партипе правительство, пирĕн çулпуç тата учитель аслă Сталин лартнă задачăсене чыслăн пурнăçа кĕртĕç, вĕренÿ пахалăхне татах та çÿлерех çĕклессишĕн, социализмлă çĕршыв валли паттăр воинсемпе ăста работниксем вĕрентсе çитĕнтерессишĕн пĕтĕм вăя хура ĕçлĕç. Вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕпе ирсĕр тăшмана—нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвне çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ВЦСПС-па РСФСР Совнаркомĕ «РСФСР-ти вырăнти промышленноçăн, автомобиль транспорчĕн, коммунальнăй хуçалăхăн, вырăнти топливо промышленноçĕн тата промысла кооперацн предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене çирĕплетесси çинчен» 1942 çулти августăн 7-мĕшĕнче постановлени йышăннă. Çак ыйтăва нумай пулмасть Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕнче сÿтсе-явнă. Социализмлă ăмăртура пирĕн республикăри вырăнти промышленность, топливо промышленноçĕ тата промысла кооперацн енĕпе çĕнтерекенсем валли Чăваш АССР Совнаркомĕ хăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавĕсене тума йышăннă. Хĕрлĕ ялавсем пурĕ виççĕ. Вĕсенчен пĕрине — социализмлă ăмăртура çĕнтернĕ вырăнти топливо промышленноçĕн предприятине, леспромхоза тата районри вăрман хатĕрлекен организацине; теприне—вырăнти промышленноçăн облаçри предприятине е районри, хулари промкомбината; виççĕмĕшне—промысла кооперацин артельне параççĕ.

Кунсăр пуçне Чăваш АССР Совнаркомĕ ăмăртура çĕнтерекен тата мала тухакан предприятисене пама наградăсемпе премисем тунă.

Вырăнти промышленность енĕпе:	
Хĕрлĕ ялавпа пĕрле укçан памалли награда	15 пин тенкĕ,
Пĕрремĕш преми	10 пин тенкĕ,
Иккĕмĕш преми	5 пин тенкĕ.
Вырăнти топливо промышленноçĕ енĕпе:	
Хĕрлĕ ялавпа пĕрле укçан памалли награда	20 пин тенкĕ,
Пĕрремĕш преми	15 пин тенкĕ,
Иккĕмĕш премисем (икĕ преми)	10-шар пин тенкĕ.
Промысла кооперацн енĕпе:	
Хĕрлĕ ялавпа пĕрле укçан памалли награда	15 пин тенкĕ,
Пĕрремĕш преми	10 пин тенкĕ,
Иккĕмĕш преми (икĕ преми)	5-шер пин тенкĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавĕсене памалли йĕркесемпе сроксем ВЦСПС-па РСФСР Совнаркомĕ 1942 çулти августăн 7-мĕшĕнче йышăннă постановленире кăтартнипе пĕр пекех пулаççĕ.

Уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе тухăçлăн усă курса, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе килес кунсенчех вĕçлер!

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ

Августăн 30-мĕшĕнче ВЛКСМ Чăваш организацийĕ государствăна тырă памалли воскресник туса ирттерчĕ. Комсомолăн чылай районсенчи организацийĕсем воскреснике ирттерме лайăх хатĕрленчĕç, çавна пула воскресник лайăх иртрĕ. Шупашкарти хатĕрлев пунктне 1.310 лав пынă, 3.277 центнер тырă панă. Канашри хатĕрлев пунктне пилĕк пин лав ытла пырса 1.500 тоннăна яхăн тырă хывнă. Улатăрти хатĕрлев пунктне икĕ пин лава яхăн пынă.

Çак кун Шупашкар районĕнчи колхозсем государствăна 1.489 центнер тырă, Сĕнтĕр районĕ 1.770 центнер, Ишлей районĕ—1.030 центнер, Хĕрлĕ Чутай районĕ—1.220 центнер тырă, Тăвай районĕ—340 центнер тырă, 65 центнер пахча-çимĕç, Отябрьски район—1.181 центнер, Куславкка районĕ—580 центнер тырă панă.

Ытти районсенчи комсомолецсемпе çамрăксем те çав кун хĕрлĕ обозсем организацилесе, хатĕрлев пункчĕсене тырă леçнĕ.

116 тонна тырă хывнă

ВĂРМАР. (Телефонпа). Августăн 30-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне 368 лав пырса 116 тонна тырă панă. Лешкас Мăнçырма, Кивĕ Вăрмар, Кавал, Арабусь, Тупах, Çĕнĕ Кавал, Чулкас колхозĕсем çак кун тырă леçме станцине икшер хутларĕç.

Воскреснике уйрăмах комсомолăн «Маяк» колхозри пуçламĕш организацийĕ лайăх организацилесе ирттерчĕ. 22 лавлă хĕрлĕ обозăн пуçĕнче комсомол организацин секретарĕ Иванов юлташ пычĕ. Çавăн пекех Кĕтеснерти колхозăн 13 лавлă обозне комсомол организацин секретарĕ Степанов, Лешкас Мăнçырмари колхозăн 10 лавлă обозне —комсомол организацин секретарĕ Максимова юлташсем ертсе пычĕç.

Тырă турттарса пынă çынсем хушшинче 267 комсомолец пулнă.

И. ЗАЛЕВСКИЙ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Воскреснике комсомолецсемпе çамрăксем йышлăн хутшăнчĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). Августăн 30-мĕшĕнче комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе воскресник туса ирттерчĕç. Нумай колхозсенчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хĕрлĕ обозсемпе хатĕрлев пункчĕсене тырă леçме кайрĕç.

Комсомолăн Нĕркеç колхозĕнчи пуçламĕш организацин секретарĕ Г. Коновалов юлташ воскреснике ирттерме комсомолецсемпе çамрăксене лайăх мобилизацилерĕ. Унтан 18 лавлă обоз 50 центнер тырă тиесе хатĕрлев пунктне кайнă.

Районри ытти колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем те воскреснике хутшăннă. Çĕрпÿелĕнчи «Культура» колхозри комсомолецсем (пуçламĕш организацин секретарĕ Ф. Скворцова юлташ) 16 лавлă обоз организациленĕ, государствăна 34 центнер тырă панă. «Янга Турмыш» колхозран (комсомол организацин секретарĕ М. Юмаков юлташ) государствăна тырă пама 21 лавпа кайнă. «Коммунар» колхозран (комсомол организацин секретарĕ К. Захарова юлташ)—9 лавлă, «Красный маяк» колхозран (комсомол организацин секретарĕ М. Ласточкина юлташ) — 8 лавлă обозсем тырă кайса леçнĕ.

Е. ГОЛЛАНДЦЕВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Тăвай МТС-ĕнчи тракторист Захаров юлташ. Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 106 процент тултарнă, 294 килограмм горючи перекетленĕ.

Район тырă парас тĕлĕшпе юлса пырать

ИЕПРЕÇ. (Телефонпа). Район тырă памалли графика кашни пилĕккунлăхрах тултарса пырас вырăнне çак ĕçри хăвăртлăхсене чакарса пырать: пĕрремĕш пилĕккунлăхра тырă памалли графика 175 процент тултарнă пулсан, иккĕмĕш пилĕккунлăхра 77,3 процент кăна тултарнă, виççĕмĕш пилĕккунлăхра унтан та каярах—57,7 процент çеç тултарнă. Колхозсем тăрăх илсен, ĕç çапла курăнать: графика иккĕмĕш пилĕккунлăхра 14 колхоз тултарнă пулсан, виççĕмĕш пилĕккунлăхра 11 колхоз кăна тултарнă. «Социализм» тата 17-мĕш Партсъезд ячĕпе тăракан колхозсем тырă пама халĕ те тытăнман-ха. «Социализм» колхозра, акă, 10 гектар çинчи тырра çапнă та колхозрах сапаласа янă, государствăна пĕр пĕрчĕ те паман. 17-мĕш Партсъезд ячĕпе тăракан колхозра та 8 гектар çинчи тырра çапса государствăна нимĕн те паман. Çапла, кунта Совнаркомпа ЦК ВКП(б) тырă тăратас тĕлĕшпе кăтартса панине пурнăçа кĕртмеççĕ.

Хăшпĕр колхозсем тырă памалли графика малтанхи пилĕккунлăхра тултарнă та вара çав çитĕнÿпе лăпланса ларнă. Сăмахран, «Красный водник» колхоз иккĕмĕш пилĕккунлăхра графика 127 процент тултарнă, виççĕмĕшĕнче 41 процент çеç тултарнă, тăваттăмĕш пилĕккунлăхра кашни кун 80 центнер тырă памалла пулнă пулсан, икĕ кун хушшинче те 53,6 центнер çеç панă. Колхоз председателĕ коммунистка Иванова тырă памалли графика пурнăçламаннине лашасен пĕр пайне кĕраки ĕçĕсене куçарнă пирки пулнă тесе ĕнентерессшĕн. Анчах унта кĕраки те ăнăçлăн пыни курăнмасть. Ĕç лашисемпе туллин усă курмаççĕ. Кĕракинче ĕçлеме 109 лаша çирĕплетнĕ. Вĕсемпе кунне сахалтан та 80 гектара яхăн сухаласа акмалла. Тĕрĕссипе 35—40 гектартан мала акмаççĕ. «Победа» колхозра (председателĕ Осипов), «Правда» колхозра (председателĕ Карпов), «Ударник» тата хăшпĕр ытти колхозсенче те ĕç çавăн пекех пырать.

Районра тырă памалли графика ăнăçлăн тултарса пыракан колхозсем те пур. Ку шута «Большевик» колхоза кĕртме юрать. Çав колхозра тырă памалли графика иккĕмĕш пилĕккунлăхра 135 процент, виççĕмĕшĕнче 136 процент тултарнă. Ытти ĕçсем те унта вăхăтра пулса пыраççĕ. Августăн 30-мĕшĕнче çуртыррисене вырса, кĕрхи тырăсене акса пĕтереççĕ. «Коминтерн» колхоз та хăйĕн ĕçĕсене вăхăтра туса пырать. Вăл тăваттăмĕш пилĕккунлăхра памалли тырра виççĕмĕшĕнчех панă. Анчах та ун пек колхозсем районра сахал.

Тăваттăмĕш пилĕккунлăха кĕни икĕ кун çитрĕ ĕнтĕ. Анчах çак икĕ кун хушшинче районри 48 колхозран 21 колхоз тырă пĕр килограмм та паман. Çавна пула район çак тăваттăмĕш пилĕккунлăхри графика 7,56 процент çеç тултарнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Кĕлте кÿртес ĕçе вăйлатмалла

ЕЛЧĔК, августăн 31-мĕш. (Телефонпа). Кĕракинче фронтри пек ĕçлемелли пилĕккунлăха хутшăннă хыççăн районра кĕрхи тырăсене акас ĕçĕн хăвăртлăхĕ чылай ÿсрĕ. Августăн 30-мĕш тĕлне районри 4 колхоз кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозри сеяльщик Иван Казначеев 13 ретлĕ сеялкăпа кулленех 7-шер гектар акать. Нормăна ирттерсе акакансем ытти колхозсенче те пур. Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, район кĕракинче сеялкăсемпе туллин усă курмасть-ха. Районри 157 сеялкăпа нормăна тултарса, йĕркеллĕн ĕçленĕ пулсан, пирĕн колхозсем кĕракине ку таранччен вĕçлетчĕç те ĕнтĕ. Ĕнерхи кун тĕлне кĕртырисем пурĕ 11.642 гектар çине çеç акнă, çакă вăл акмалли лаптăкăн 85 проценчĕ пулать.

Августăн 30-мĕш тĕлне районри колхозсем пучахлă тĕштырăсене, пăрçа тата кĕрпе йышши культурăсене 24.745 гектар çинчен вырса кĕнĕ, вăл шутран 16.207 гектарне машинăсемпе вырнă. 8.742 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, 5.218 гектар тыррине çапнă.

Тăвай МТС-ĕнчи стахановецсем

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса И. Петров юлташ ертсе пыракан 4-мĕш номерлĕ трактор бригади çулталăкри ĕçсен планне 150 процентран кая мар тултарма обязательство илнĕччĕ. Çулталăкри ĕç планĕ тăрăх ку бригадăн 1.543,6 гектар çинчи ĕçсене тумалла пулнă, халĕ вăл, çемçе суха çине куçарса, 2.078,51 гектар сухаларĕ, çулталăкри ĕç планне 131,20 процент тултарчĕ. Çав вăхăтрах 3.168 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çапла вара ку бригада МТС дирекципе политотделĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Уйрăмăнах Д. Арапов, В. Захаров, А. Васильева тата П. Петров трактористсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем кашниех çулталăкри ĕçсен планне ирттерсе тултарчĕç. Трактористка Васильева юлташăн У—2 тракторпа çулталăкра 150 гектар çинчи ĕçсене тумалла пулсан, ку таранччен вăл 187,41 гектар çинчи ĕçсене туса плана 125 процент тултарчĕ, 469 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Унпа пĕрле ĕçлекен Петров тракторист та хăйĕн сменинче 168,40 гектар сухаласа, çулталăкри ĕç планне 112,2 процент тултарчĕ, 394 килограмм горючи перекетлерĕ. ЧТЗ тракторпа ĕçлекен В. Захаровпа Д. Арапов юлташсем те çулталăкри ĕç планне 106-шар процент тултарса, 420-шер килограмм горючи перекетлерĕç. Ку бригадăрах СТЗ тракторпа ĕçлекен Д. Ермолаевăпа Е. Петрова трактористкăсем, çулталăкри плана 90 процентран ытларах тултарса, иккĕшĕ пĕрле 1.441 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕç.

И. Егоров юлташ ертсе пыракан 12-мĕш номерлĕ бригада та пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Вăл çулталăкри ĕçсен планне 125 процент тултарчĕ, 2.563 килограмм горючи перекетлерĕ. Çавăн пекех комсомолец Павел Коровинăн бригади те çулталăкри ĕçсен планне 108,2 процент тултарса, 3.692 килограмм горючи перекетлерĕ. Тракторист Т. Сорокин юлташ çулталăк хушшинче 450 гектар сухалас вырăнне 738,67 гектар сухаларĕ, çулталăкри плана 164,1 процент тултарчĕ. Çав вăхăтрах вăл 1.402 килограмм горючи перекетлерĕ. Александр Баданов 735,59 гектар сухаласа, çулталăкри плана 163,4 процент тултарчĕ, пурĕ 1.271 килограмм горючи перекетлерĕ.

11-мĕш бригадăра ĕçлекен комсомолка Нина Кузьмина трактористкăн ĕçĕ уйрăмăнах мухтава тивĕçлĕ. Вăл 17 çулта çеç-ха. Тракторпа ĕçлеме те кăçал тин пуçланă. Çак çамрăк трактористка план тăрăх çулталăкра 225 гектар ĕçлес вырăнне, ку таранччен 305,03 гектар ĕçлесе плана 135,5 процент тултарчĕ, 1.382 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Халĕ унăн тракторĕ комбайнпа тырă вырать. Çавăн пекех 10-мĕш бригадăри Анна Ивановăпа Анна Михайлова трактористкăсем те çулталăкри ĕçсен планне ирттерсе тултарса, ăмăртура мала тухрĕç. 2-мĕш бригадăри пĕр тăван трактористкăсем Анна тата Наталия Карзаковăсем 7-мĕш номерлĕ СТЗ тракторпа ĕçлеççĕ. Наталия ку трактор çинче 5-мĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Кăçал вăл пурĕ 262,59 гектар çинчи ĕçе туса, 121 килограмм горючи перекетлерĕ. Çуракинче мала тухнăшăн ăна ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе политсекторĕ 250 тенкĕ укçан тата хисеплĕ грамота парса наградăларĕç. Çак наградăна илнĕ хыççăн вăл татах хастарлăн ĕçлеме пуçларĕ. Унăн йăмăкĕ Наталия Карзакова кăçал çеç трактор çинче ĕçлет, апла пулин те аппăшĕнчен юлмасть. Вăл 171,77 гектар çинче ĕçлесе 202 килограмм горючи перекетлерĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухса пирĕн МТС коллективĕ кăçал хăй çине çулталăкри ĕç планне 110 процентран кая мар тултарма, горючисене 10 процентран кая мар перекетлеме, ĕç хакне 5 процентран кая мар йÿнетме обязательство илнĕ. Эпир илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртетпĕрех. Çакна пирĕн МТС августăн 20-мĕш тĕлне çулталăкри ĕçсен планне 80 процент тултарни, 14 пин тенкĕлĕх горючи перекетлесе хăварни те çирĕплетсе параççĕ. Анчах пирĕн МТС-ра юлса пыракан бригадăсемпе трактористсем те пур-ха. А. Чернов ертсе пыракан 9-мĕш бригада çулталăкри плана пурĕ те 40 процент, 5-мĕш бригада—52 процент, 2-мĕш бригада—54 процент, 7-мĕш бригада—56,1 процент çеç тултарчĕç, вĕсем горючисене те тирпейлĕ тыткаламаççĕ.

Пирĕн умра тăракан задача вăл—трактористсемпе трактористкăсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçпе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, хамăр МТС-а республикăра малти вырăна кăларассишĕн, мĕнпур ĕçсен планне срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешесси пулать.

В. ЧЕРНОВ.
Тăвай МТС политотделĕн начальникĕ.

Ватă колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ

ШАМĂРША. «Победа» колхозра 72 çулхи С. Фомина юлташ ыраш вырнă çĕрте нормăна 170 процент таран тултарса ĕçлерĕ, ыраш çапнă çĕрте те тăрăшса ĕçлет.

69 çулхи Е. Якушов юлташ тырă çулма кĕрепленлĕ çавасем нумай туса пачĕ. Ыраш акнă çĕрте нормăна 120—135 процент тултарса пырать.

Çавăн пекех ватă колхозниксем Н. Кузьминпа Л. Николаев та колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ.

П. КУЗЬМИН.
М. ВАСАН.

Первомайски районра кĕраки ĕçĕсем юлса пыраççĕ

Августăн 29-мĕшне илнĕ даннăйсем тăрăх, район кĕрхи тырăсене 4.100 гектар çине акнă, кĕраки планне 57,7 процент çеç тултарнă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ йышăннă тăрăх, кĕраки ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе августăн 25-мĕшĕнчен пуçласа республикăра фронтри пек ĕçлемелли пилĕккунлăх пуçланчĕ. Çак пилĕккунлăха Первомайски районри колхозсем начар хутшăнчĕç. Çавăнпа унти «Восход» тата «КИМ» колхозсем çеç кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç.

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Романова юлташ пĕлтернĕ тăрăх, районри колхозсем кĕракине августăн 12—13-мĕш кунĕсенче тухнă. 20 кун хушши акса та вĕсем ку ĕçе вĕçлеймен. Кун пек «хăвăртлăхсемпе» ĕçлесен, район кĕрхи тырăсене хăçан акса пĕтерет-ха?

Районра çуртыррисене вырас, кĕлтесене кÿрсе капана хывас, авăн çапас ĕçсем те кая юлса пыраççĕ. Августăн 29-мĕш тĕлне 8.802 гектар çинчи тырăсене çеç вырса пухнă, çакă вăл плана 67 процент тултарни пулать. Уборка ĕçĕсем юлса пыни комбайнсемпе, тырă вырмалли машинăсемпе туллин усă курманнинчен килет. МТС-ĕн 6 комбайнĕ уборкăна тухнăранпа та 323 гектар çинчи тырăсене çеç пухса кĕртнĕ. Жнейкăсемпе те 2.707 гектарне çеç вырнă. Çуртыррисене вырас ĕçе «Восход», «КИМ», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çеç вĕçленĕ.

Кĕлте кÿрсе вĕсене капана хывасси тата авăн çапасси тÿсме çук сÿрĕккĕн пулса пыраççĕ. Августăн 29-мĕш тĕлне 2.015 гектар тыррине çапса кĕртнĕ. Кĕлте турттарас ĕçре хĕсĕр, сĕт сахал паракан ĕнесемпе тата вăкăрсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ. «Мичурин», «Красный флот» тата «Пионер» колхозсенче çак ĕçе кÿлнĕ вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесем начар мар ĕçлеççĕ, анчах вĕсен примерĕпе çителĕксĕр усă кураççĕ.

Ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене хăвăрт туса пымалла.

Большевикла агитаци уборкăна ăнăçлăн ирттерме пулăшать

КАЛИНИНО. Шĕнерти «1-ое мая» колхозра уборка ĕçĕн малтанхи кунĕсем сÿрĕккĕн иртсе пычĕç. Уйхирте ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем ĕçе 7—8 сехетре тухса, каçхине 8—9 сехетре каялла таврăнатчĕç. Кăнтăрлахи кану вăхăчĕ те 3—4 сехет хушши тăсăлнисем пулнă.

Уйхирте ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăхлатни ĕç дисциплинине чылаях çирĕплетрĕ.

Бригадăсенче икĕ кунта пĕр номер стена хаçачĕ тухса тăни, кулленхи ĕçĕн результачĕсене кăтартакан хăмасем организациленни ĕç тухăçлăхне чылаях ÿстерме тата тăкаксене хирĕç кĕрешме пулăшрĕç. 4-мĕш бригадăра 9 гектарлă участокăн кашни тăваткал метрĕ çинчех пĕрер грамм тырă тăкăнса юлнă. Çав участок çинче 30 колхозник ĕçлесе, кашниех виçшер килограмм тырă 1 ĕçкунĕ пуçне тивекен тупăша тăкса хăварнă. Çакна стена хаçачĕпе показательсен хăми çинче çутатса панă хыççăн, колхозниксем тырă пучахĕсене пухса кĕртнĕ.

Агитаторсем В. Иванов, Я. Чирков, А. Егорова, А. Филиппова, М. Анисимов юлташсем агитациллĕ-массăллă ĕçе куллен туса пычĕç, уборкăна лайăх организацилеме тăрăшрĕç. Колхозри чи малти стахановецсен шутĕнче двухсотник-трехсотниксем О. Антонова, А. Тимофеева, В. Иванова колхозницăсем тăраççĕ. Вĕсем алăпа кунне 0,10 гектар вырас вырăнне 0,25-шер гектар вырса пычĕç.

Г. МАТВЕЕВ.

Ÿкерчĕк çинче: Тăвай МТС-ĕнчи тракторист Арапов юлташ. Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 105,5 процент тултарнă, 126 килограмм горючи перекетленĕ.

Августăн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем Берлинри, Кенигсбергри, Данцигри, Штеттинри çарпа промышленность об'екчĕсем çине бомбăсем пăрахнă

Августăн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ Берлинри, Кенигсбергри, Данцигри, Штеттинри тата Хĕвелтухăçпе Вăтаçĕр Германин ытти хăшпĕр хулисенчи çарпа промышленность объекчĕсем çине вĕçсе кайса бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Берлинра 48 пушар тухнă, вĕсенчен 17 пушарĕ пысăк пушарсем пулнă. 9 пысăк взрыв пулнине палăртнă.

Кенигсбергра 29 пушар тухнă, вĕсенчен 8-шĕ пысăк пушарсем пулнă. 6 пысăк взрыв пулнине палăртнă.

Данцигра 8 пушар тухнă, 4 пысăк взрыв пулнине палăртнă.

Штеттинра 6 пушар тухнă. 2 пысăк взрыв пулнине палăртнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базине таврăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 31-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Августăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран сурçĕр(-хĕвеланăçне-)рехри районра Н-ски танковăй часть противника хирĕç темиçе сехет хушши пынă çапăçура нимĕçсен 12 танкне, 14 орудине, 8 пулеметнăй точкине пĕтерсе тăкнă тата 400 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем пирĕн позицисене хăйсен танкĕсемпе тата пехотипе атакăлама хăтланнă. Противникăн атакине артиллеристсемпе бронебойщиксем сирсе янă. Противникăн наступлени тунă 80 танкĕнчен 16-шне пĕтерсе тăкнă.

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем, активлă çапăçусем туса пырса, пăртак малалла куçнă.

* * *

Котельниковăран сурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн пĕр подразделени çĕрле противник вырнаçса тăнă вырăна пырса тапăннă. Пирĕн боецсем 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, 2 оруди, 5 пулемет тата 46 винтовкăпа автомат тытса илнĕ.

* * *

Краснодартан кăнтăр(тар)ахра пирĕн кавалери чаçĕ противникăн тылĕнче нимĕçсен пехотин фронт патнелле пыракан колоннине тапăннă. Кĕске тытăçура казаксем 300 гитлеровеца çити касса вакланă тата боеприпассемпе çар пурлăхĕ тиенĕ 20 грузовой автомашинăна çунтарса янă. Çав çапăçура уйрăмах çак разведчиксем палăрнă: сержант Моисеенко юлташ, курсант Постников юлташ тата Бочкаревпа Алешин юлташсем ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ.

Прохладный районĕнче артиллери гвардейски подразделенийĕ пыв урлă хывнă каçăсем çинче 11 автомашина, 3 танк тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сумы облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен К. юлташ ертсе пыракан отрячĕ противника хирĕç кĕрешсе нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 140 çынна пĕтерсе тăкнă. Партизансем 8 станковăй пулемет, 26 винтовка, 6 автомат, 2 радиостанци тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç офицерĕн Франц Шумертлĕн Креппленшлага Терези Мерваль кĕрарăм патне çырнă, анчах та яма ĕлкĕреймен çырăвĕнче çапла каланă: «Эсĕ — хăвна ху сыхла, тесе ыйтатăн Эсĕ кунта эпир мĕн-мĕн тӳссе ирттернине пĕлсессĕн, манпа урăх курнăçма шутлама пăрахнă пулăттăнччĕ. Эпĕ чĕрĕ юлăп тесе шанмастăп. Эпир ялапах вырăссен вут-çулăмĕ айĕнче тăратпăр: юлашки виçĕ кас эпĕ çур сехет те çывăрман. Ĕнер кăнтăрла пăртак çăмăлтарах пулчĕ, анчах паян каллех питĕ хăрушă япала пулса пырать. Пирĕн шăмăсене Российăн тӳремлĕхĕсенче çĕрме тиврĕ пулмалла...»

* * *

Калинин облаçĕнче, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ялсенче пурăнакан çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем юнлă тискер ĕçсем туни çинчен каласа параççĕ. Пищалино ялĕнчи колхозница Евдокия Иванова çапла каласа парать: «Нимĕçсем пирĕн яла çĕмĕрсе кĕчĕç те мĕн пур çынсене нимĕн хăвармиччен çаратса тухрĕç. Вĕсем совет çыннисене выçăпа асаплантарчĕç, ялтан кайма чарчĕç...».

Августăн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 31-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкĕпе бронемашинине çити, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине пĕтерсе [illegible] артиллерийĕн 5 батарейине [illegible] 2 складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, [illegible] 3 эшелона сĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр батальона çити салатса янă [illegible] тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем халăх пурăнакан 3 пункта [illegible] илнĕ. Халăх пурăнакан çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче [illegible] 400 салтакпа офицерне çити вилнĕ е аманнă. Пирĕн боецсем пулеметсемпе пере-пере нимĕçсен 3 самолетне ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран сурçĕр-хĕвеланăçĕнче пирĕн войскăсем противникăн пирĕн оборонăна çавăлланса кĕнĕ группировкине хирĕç хаяррăн çапăçнă. [illegible]

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем [illegible]

* * *

Котельниковăран сурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин атакисене [illegible]

артиллерин пĕр батарейине тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахра пирĕн чаçсем противникăн атакисене сире-сире янă. Н-ски чаçри боецсем нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă [illegible] Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 18 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем [illegible]

* * *

Сурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ. [illegible] нимĕçсен 28 дзотне блиндажне тата 3 пулемет тытса илнĕ. [illegible]

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен Р. юлташ ертсе пыракан отрячĕ август уйăхĕнче [illegible] 3 паровоз тата войскăсемпе [illegible] 47 вагон сĕмĕрнĕ.

* * *

Партизансен ушкăнĕ бензин тултарнă цистернăсем [illegible] 29 цистернăллă [illegible] çунса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 23-мĕш танковăй дивизийĕнчи ефрейторĕ Альфред Гельмуд çапла каласа панă: «Нимĕç салтакĕсем [illegible] Харьков [illegible] 1942 [illegible]».

* * *

Шербург ятлă военнăй портра (Франция) партизансем нимĕçсен пысăк военнăй складне çунтарса янă. Вутра 25 [illegible] 19 автомобиль, продовольстви [illegible] çунса кайнă.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Заводăн августри итогĕсем

КАНАШ, сентябрĕн 1-мĕш. (**Телефонпа**). Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ вагонсем юсакан завод коллективĕ августра июльри хăвăртлăхсене чакармасăр ĕçлерĕ. Токарев, Соколовский тата Губский юлташсем ертсе пыракан цехсем государствăн августри заданине 115 процент тултарчĕç. Трухин юлташăн цехĕ те уйăхри плана ăнăçлăн вĕçлерĕ.

Йывăççем каскалакан, тимĕрçĕ, механически цехсем те августра июльринчен тухăçлăрах ĕçлерĕç. Вĕсем продукцие уйăхри планпа пăхнинчен ытларах туса кăларчĕç.

Заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ вагонсем юсакан цехăн кăтартăвĕсем уйрăмах лайăх. Августра вагонсем юсамалли государственнăй плана 42 процент ирттерсе тултарнă. Чесов, Чернухин тата Капелюха бригадисем—цехри ăмăртура малта пыракансем.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Уйăхри программăна тултарчĕ

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 31-мĕш. (**Телефонпа**). Грибовский юлташ ертсе пыракан комбинат август уйăхĕнчи производство программине ытлашшипех тултарчĕ. Кашни рабочин уйăхри ĕç тухăçлăхĕ нормăран 36 процент ытларах. Коллектив çак çитĕнĕве социализмлă ăмăртăва тивĕçлĕн хутшăнса ĕçлесе турĕ.

Уйрăм цехсенчен плана Нестеровский юлташăн цехĕ малтан тултарчĕ. Ку цехри Корнеев, Шишкин рабочисем кашни кун темиçешер норма тултарса ĕçлерĕç.

Талăкри графика уйрăмах Данилов юлташăн цехĕ тикĕс пурнăçласа пычĕ. Большакова, Иванова, Герасимова, Никитина юлташсем—цехра малта пыракан двухсотниксем.

Назаровпа Новохатный юлташсен цехĕсем те уйăхри плана срокчен тултарчĕç. Уточкин, Маркелов, Верендеев, Доронин, Розанов тата Сазонов юлташсем—ку цехсенчи чи тухăçлă ĕçлекен рабочисем.

К. ДМИТРИЕВ,
Завком председателĕ.

Комбинатăн ăмăртури çитĕнĕвĕ

КУСЛАВККА, августăн 31-мĕш. (**Телефонпа**). Июль уйăхĕнче комбинат (директорĕ Шелухин юлташ) планпа палăртнинчен начартарах ĕçлерĕ. Августра коллектив хăйĕн ĕçне чылай урăхлатса çĕнетрĕ, стахановла движенипе социализмлă ăмăртăва вăйлатрĕ. Çавна май комбинат августри программăна ирттерсе тултарчĕ.

Уйрăм цехсенчен Калашников юлташăн цехĕ лайăхрах ĕçлерĕ. Цех уйăхри задание срокчен тата ытлашшипех тултарчĕ. Шутовпа Герасимов мастерсем производствăна пултаруллăн ертсе пычĕç. Колесников, Майоров тата Желанкин стахановецсем нормăна кулленех 2—3 хут ирттерсе тултарчĕç.

Дружининпа Симонов юлташсен цехĕсем те августри ĕçсене ăнăçлăн вĕçлерĕç.

В. НОВИКОВ,
Завком председателĕ.

Августра стахановецсен йышĕ 65 процента çитрĕ

ВАРНАР, августăн 31-мĕш. (**Телефонпа**). Ĕнер, августăн 30-мĕшĕнче, фосфорит заводĕ уйăхри производство планне тултарчĕ. Паян завод планран ирттерсе продукци парать.

Социализмлă ăмăртура стахановецсен йышĕ уйăхран уйăха ӳссе пырать. Июльре вĕсен хисепĕ 46 процент пулнă, августра вăл 65 процента çитрĕ. Ударниксем 26 процент шутланаççĕ. Çав вăхăтрах нормăна тултарайманнисен хисепĕ 18 процентран 8 процента çити чакрĕ.

Заводри ăмăртура, малтанхи пекех, Андреева юлташăн смени малта пырать. Смена изделисене пĕр пек тикĕс кăларса тăрать. Работницăсем К. Титова, А. Рыжкова, Назардинова, Тимофеева тата Александрова юлташсем нормăна 160—200 процент тултараççĕ.

Юлашки уйăхсенче инженерсемпе техниксем 14 рационализаторла сĕнӳ пачĕç. Вĕсене пурне те пăхса тухса йышăннă. Механик Москалев юлташ панă сĕнӳ завода çулталăкра 16.776 тенкĕ перекет кӳрет. Мастер Швецов юлташăн сĕнĕвĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

И. БОЛОТНИКОВ,
Завод директорĕ.

ПЛАНПА ПĂХНĂ ЧУХЛĔ

Шупашкарти чăлха фабрики августри плана ăнăçлăн тултарчĕ, продукцие планпа пăхнă чухлĕ туса кăларчĕ. Уйрăм цехсенчен изделисене пĕтĕçтерекен цех (заведующийĕ Штерн юлташ) лайăхрах ĕçлерĕ. Уйăхри задание вăл срокченех 101 процент тултарчĕ. Рославская, Гранат работницăсем нормăна 150—170 процент тултарса пычĕç.

Машинăсен цехĕнчи работницăсен ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. Норма тăрăх работницăн 18 машинăпа ĕçлемелле. Стахановка Матюшко юлташ, 22 машинăпа ĕçлесе, нормăна 150 процент тултарать, Лукьяненко, Кашинская комсомолкăсен тата Данилович работницăн ĕç тухăçлăхĕ те çакăнтан кая мар. Петрова, Буксирова юлташсем вара 200 процентран та ирттереççĕ. Башкаева юлташ та, фабрикăна 2 уйăх каялла килсе кĕнĕскер, нормăна ăнăçлăн тултарать.

Е. БОГУСЛАВСКАЯ,
Фабрика директорĕ.

Вĕренӳ çулĕ организованно пуçланчĕ

ИШЛЕЙ. (**Телефонпа**). Районри шкулсем вĕренӳ çулне кĕтсе илме тĕплĕн хатĕрленчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче тухса тăнă пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, чылай шкул коллективĕсем хăйсене вĕренӳ çулĕнче мĕн кирлине пурне те туса çитерме ĕлкĕрчĕç.

Пĕрремĕшпе тăваттăмĕш классенче ĕнер 3.036 ача вĕренме тытăнчĕ. Шкулта вĕренме тивĕçлĕ ачасене пур çĕрте те списоксем тăрăх тĕплĕн шута илнĕ. Кăçал пирĕн районри шкулсем умне учительсен кадрĕсем тĕлĕшпе чылай пысăк йывăрлăхсем тухса тăнăччĕ. Эпир çак йывăрлăха сирсе яма тăрăшрăмăр. Фронта кайнă учительсем вырăнне иртнĕ çулсенче вăтам шкултан вĕренсе тухнă çамрăксенчен 34 çынна учитель ĕçне кĕртрĕмĕр. Халĕ пуçламĕш классенче татах 3 учитель çитмест-ха. Вĕсем вырăнне халлĕхе аслă классенче вĕрентекен учительсем ĕçлеççĕ. Çитмен учительсене çак кунсенчех тупатпăр. Вăтам шултан вĕренсе тухнисем татах 15 çын учителе кĕме ыйтса заявлени панă. Вĕсене тĕрĕслетпĕр, суйлатпăр.

Çамрăк учительсене пулăшас тĕлĕшпе эпир августăн 30-мĕшĕнче пĕрремĕшпе тăваттăмĕш классенче ĕçлекен учительсен конференцине туса ирттертĕмĕр. Унта ĕç планĕсене пăхса тухса сӳтсе яврăмăр, нумай çул хушши ĕçленĕ опытлă учительсем çамрăксем валли методикăлла докладсем туса пачĕç.

Учебниксем, вырăсла учебниксемсĕр пуçне, кĕçĕн классем валли çителĕклĕ. Малтанхи вăхăтлăха çырмалли хут та çителĕклĕ пулать. Пирĕн шкулсем иртнĕ çулсенче хут чылай перекетлесе хăварнă. Çав хута эпир халь тĕплĕн шута илсе тухрăмăр, шкулсенче 5.000 тетрадь пуррине палăртрăмăр. Кунсăр пуçне тата çĕнĕрен 130 килограмм хут турттарса килтĕмĕр.

Шкул ачисем çуллахи вăхăтра колхозсене уйхир ĕçĕнче нумай пулăшрĕç. Аслăрах классенче вĕренекенсем хирте октябрĕн 1-мĕшчен ĕçлеççĕ. Уйхир ĕçĕнче ĕçлекен 1.083 ача августăн 20-мĕш тĕлне 34.847 ĕçкунĕ тунă.

Шкул ачисем колхозсене пулăшнине кура, колхозсем хăйсем те шкулсене пулăшма тăрăшаççĕ. Пирĕн шкулсене çитес хĕлте 5.200 кубометр вутă кирлĕ пулать. Вĕсенчен халĕ 1.835 кубометр хатĕрри пур. 1.797 кубометр хатĕрлесе хунă тата 1.507 кубометр хатĕрлемелле пулать.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе Хыркассинчи, Кăшавăшри, Çĕнъял Покровскинчи туллимар вăтам шкулсем аван ĕçлерĕç. Çав вăхăтрах Тăрăнти туллимар вăтам шкул (директорĕ А. Николаева) çĕнĕ вĕренӳ çулне питĕ начар хатĕрленчĕ.

Учительсемпе вĕренекенсем кăçалхи вĕренӳ çулĕнчи ответлăха лайăх туйса тăраççĕ. Вĕсем шкул ачисене вĕренĕве тĕрĕс-тĕкĕл çӳретессишĕн, вĕренӳ пахалăхне татах та ытларах ӳстерессишĕн çине тăрса ĕçлеме пулаççĕ.

Т. ГАГАРИН,
Районри çутĕç пайĕн заведующийĕ.

Хĕрсем çар ĕçне вĕренеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Хĕрарăмсем çар ĕçне пысăк активлăхпа вĕренеççĕ. Çакна Осоавиахим райсовечĕ çумĕнче организациленĕ всевобуч подразделенинче вĕренекенсем лайăх кăтартса пачĕç. Хулари хĕрсем кĕске вăхăт хушшинчех винтовка пайĕсене, стройпа çӳреме, сывлăшран килсе тапăнасран сыхланма вĕренчĕç. Занятисем ялан тенĕ пекех йĕркеллĕн тата организованно пулса иртрĕç. 110 сехетлĕ программăна пур подразделенисенче те тенĕ пекех ăнăçлăн вĕренсе тухрĕç. Вĕренекенсем хушшинче отличницăсем сахал мар. Комсомолкăсем Селезнева, Хоричева, Кутырева, Медведева, Укрычева юлташсем пур дисциплинăсемпе те «отлично» паллăсем илчĕç. Калас пулать, асăннă юлташсем производствăра та пример кăтартса ĕçлеççĕ, вĕсенчен чылайĕшĕсем стахановкăсем.

Çар ĕçне коммунистка Шумилкина, Сидорова, Мурлышкина, Савадерова юлташсем те аван вĕренчĕç.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ НЮРНБЕРГПА СААРБЮКЕН ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 29-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, августăн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Нюрнбергпа Саарбрюкенри тĕрлĕ объектсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Нюрнберг çине—Германи çар промышленноçĕн çав паха центрĕ çине—уйрăмах хаяррăн тапăннă. Икĕ хулара та пушарсем нумай тухнă. Çав операцисенчен хăйсен базисем çине 30 бомбардировщик таврăнман.

Истребительнăй авиаци Çурçĕр Францин çыранĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

Америка авиацийĕн «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем августăн 28-мĕшĕнче Альбер çывăхĕнчи авиаци завочĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Противникăн самолечĕсем ĕнер Бристоль çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахни пăртак сиен кӳнĕ.

АНГЛИН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИСЕН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 29-мĕш. (ТАСС). Тинĕс-çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин Вăтаçĕрти тинĕсре кĕрешекен подводнăй лодкисем противникăн флотне хирĕç ăнăçлă операцисем туса ирттернĕ. Пĕр пысăк танкера тата пĕр пысăк грузовой суднăна путарнă. Ытти 3 грузовой парохода торпедăланă.

ТУРЦИ ХАÇАЧĔ ИТАЛИ ФАШИСЧĔСЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЕ ТУРТСА ИЛЕС ПЛАНĔСЕМ ÇИНЧЕН

СТАМБУЛ, августăн 30-мĕш. (ТАСС). «Джумхуриет» хаçат итальянецсен «Джорнале д'Италиа» хаçатĕнче пичетленĕ Гайда статьи пирки (çав статьяра Гайда «Италин пурнăç пространствине» ĕлĕкхи Оттоман империйĕн владенийĕсем те кĕреççĕ, тесе çырнă) çапла çырать: «Оттоман империйĕ Италия хăçан та пулсан унăн еткерне (наследствине) хапсăнĕ тесе нихăçан та шухăшлама та пултарайман. Чăнах та ĕнтĕ, Италие Оттоман империйĕ çуратман, Оттоман империйĕ Италипе—унăн хăйĕн еткерне Италия хапсăннине законлă тăвакан çыхăну тытман».

«Çакна пăхмасăрах итальянецсен пĕр журналисчĕ çавăн пек ыйту кăларса тăратни,—тет хаçат,—пур ушкăнсене те Итали тĕлĕшĕпе питĕ те иккĕлентерме пултарать тата вăл Çурçĕр Африкăрипе Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи арабсене Итали çинчен çавтери начар шухăшлаттарать».

ЛИТВАРА 400 ЗАЛОЖНИКЕ ПЕРСЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 29-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен хаçачĕсем çапла пĕлтереççĕ: Литвара икĕ нимĕçе вĕлернĕ пирки унта 400 заложнике персе пăрахнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ДАКАРА ТЫТСА ИЛМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 28-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ тĕнĕл держависем Дакар тавра ытларах явăçма тытăннине палăртать. Берлинри тата Римри радиостанцисем: союзниксем Дакара хирĕç темĕнле ĕçсем тума хатĕрленеççĕ, тесе сăмах сараççĕ. Корреспондент çапла кăтартса парать: тĕнĕл держависен пропаганди Дакар çине çавăн пек кĕтмен çĕртен интересленсе пăхма тытăнни вăл çав района нимĕçсем енчен контроль туса тăрассине хăйсен аллине илес шутпа пулса пырать.

МАЙН ПОРДА ГОСУДАРСТВЕННĂЙ МИНИСТРĂН ЗАМЕСТИТЕЛĔ ТУСА ХУНИ

ЛОНДОН, августăн 29-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Майн порда Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи государственнăй министрăн заместителĕ туса лартнă.

ГЕСТАПОВЕЦСЕМ ВЕНГРИН ВИЦЕ-РЕГЕНТНЕ ХОРТИНЕ ВĔЛЕРНИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ХЫПАРСЕМ

ЖЕНЕВА, августăн 29-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх Хортин ывăлне — Венгрин вице-регентне Иштван Хортине вĕлерни çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă май пĕтĕм Венгрире çынсем хытă хумханаççĕ. Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Иштван Хортине Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче вĕлернĕ, тенĕ. Анчах та Будапештра вице-регента гестапо агенчĕсем вĕлернĕ тесе шухăшлаççĕ. Çапла кăтартса параççĕ: Хортине ăна политикăллă шухăшсемпе тата Гитлер хушнă тăрăх вĕлернĕ, теççĕ. Иштван Хорти хăйне вице-регент вырăнне лартиччченех тата чи юлашки вăхăтченех Германи çĕнĕ те çĕнĕ войскăсем пама ыйтнине пурнăçлассине хансĕрлеме тăрăшнă. Иштван Хортине нимĕçсем вице-регент тăвасшăн мар пулнă, нимĕçсем çав вырăна хăйсене ытларах итлекен тата хытăрах пăхăнакан герцога Альбрехта лартасшăн пулнă. Иштван Хорти нумаях пулмасть Совет Союзĕпе Германи фронтне пырса кайнă, унта вăл нимĕçсем венгерец салтакĕсем çине тупă какайĕ çине пăхнă пек пăхнине курнă. Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Венгри войскисен çухатăвĕсем Хортине хăратса янă, вăл вара Будапешта таврăннă хыççăн Венгри чаçĕсене малашне фронта ярассине хирĕç уйăрăмхинчен вăйлăрах тухса каланă. Çавна май гестапон Будапештри агенчĕсем Хортине часрах «çул çинчен пăрса хума» хушакан кăтарту илнĕ, вĕсем вара Хортине вăл фронта инспекциллĕ тĕллевсемпе иккĕмĕш хут кайнă вăхăтра вĕлернĕ.

СТАМБУЛ, августăн 29-мĕш. (ТАСС). «Тюрки» хаçат хăйĕн редакторĕ Байкурт Хортин ывăлне тĕлĕнтермелле условисенче вĕлерни çинчен çырнă статьине пичетлет.

Автор çапла çырать: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Будапештра Хорти ывăлне нимĕçсем вĕлерни çинчен тата Гитлер Венгрири халăхи режима пĕтерсе хурса Венгрирен Германин колонийĕ туса хума шухăшлани çинчен калакан хыпарсем анлăн саралнă. Венгрири темиçе хулара халăх демонстрацисем туса ирттернĕ, вăл Гитлер ют çĕршывсене туртса илме шухăшланине хирĕç протестлет. Полици демонстрацире пулнă çынсем хушшинче йышлă арестсем туса ирттернĕ. Çав хыпарсем тăрăхах, Хорти вилсен икĕ кунтан регент Гитлерăн хăй çырнă посланине илнĕ. Çав посланире Гитлер политикăллă требованисем лартнă, тесе шутлаççĕ.

ИНДИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, августăн 28-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Бомбейран пĕлтернĕ тăрăх, Индири пăлханусем малалла пулса пыраççĕ.

Вихар провинцин правительстви халăха çапла асăрхаттарнă: саботаж туни е çаратни сисĕннĕ çынсене вырăнтах пере-пере пăрахаççĕ. Кунсăр пуçне тата хумханусем пулнă районсем çине коллективлă штрафсем хураççĕ.

Çав агентствах Делирен пĕлтернĕ тăрăх, кунта приказ кăларнă. Çав приказра саботаж тунă е саботаж тума хăтланакан çынсене асаплантарса вĕлереççĕ е хĕнеççĕ.

КĔСКЕН

● Канада çарĕнче хальхи вăхăтра 140 пин çын шутланать, çакă вăл иртнĕ тĕнче вăрçинче пулнинчен 15 пин çын ытла пулать. Салтаксенчен 40 проценчĕ хăйсен çĕршывĕн тулашĕнче службăра тăма кăмăл тунă. (ТАСС).

● Англин Вăтаçĕр тинĕсре нумаях пулмасть путарнă «Игл» ятлă авианосецĕн экипажĕн çăлăнса юлнă 150 членĕ Гибралтара пырса çитнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Заочное отделение Чувашского Государственного Педагогического института продолжает прием заявлений на заочное обучение до 1 октября с. г. на факультеты Педагогического и Учительского институтов: исторический, языка и литературы (с отделением русского языка и литературы и чувашского языка и литературы), физико-математический и естествоведческий.

Правила приема об'явлены в газете «Красная Чувашия» от 6 июня с. г.

Дирекция.

Мариинско-Посадский филиал Московского Гидротехнического Института и Марпосадский техникум землеустройства и гидромеллиорации извещают студентов, что начало учебных занятий в соответствии с решением СНК СССР установлено с 1 октября.

Прием заявлений продлен до 15 сентября. ДИРЕКЦИЯ.

Требуется на постоянную работу бухгалтер-ревизор. Обращаться: ул. Урицкого, 36, Чувашлеспродторг. 2—1.

Филиал Горьковского Электромеханического техникума НКЭП продолжает прием заявлений.

Техникум без отрыва от производства готовит техников-технологов по холодной обработке металлов резанием и давлением и техников-электриков по аппаратостроению.

Срок обучения 4 года.

В техникум принимаются лица без ограничения возраста, имеющие образование в объеме 7 классов средней школы.

Заявления о зачислении в техникум подаются на имя заведующего филиалом с приложением: автобиографии, свидетельства о рождении, справки лечебного учреждения о состоянии здоровья, справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), трех фотокарточек.

Вместо свидетельства о рождении, граждане, достигшие 16-летнего возраста, предъявляют паспорт при личной явке.

Лица, окончившие 9 и 10 классов средней школы, принимаются без приемных экзаменов на 2-й курс.

Производится прием заявлений на 3-й курс от лиц, имеющих соответствующие знания.

Оплата за обучение в техникуме 75 руб. в год.

Заявления принимаются ежедневно от 18 час. до 19 час. в помещении бюро пропусков завода (ул. К. Маркса, 80).

3—1 ЗАВ. ФИЛИАЛОМ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—93, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 918 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.